

ИЛПЕК МИКУЛАЙĚ.

Илпек Микулайě — чăвашсен паллă çыравçи. Унăн кěнекисем чăвашла, вырăсла çеç мар, ют çěршыв чěлхисемпе те пичетленсе тухнă. Хăй вăл ырă кăмăллă та сăпайлă çын пулнă.

Илпек Микулайě учительре те ěçленě. Ача-пăча валли те сахал мар çырнă. Унăн кěнекисен чěлхи хитре: сăмахěсем сăнарлă, вырăнлă, çыпăçуллă.

Эпě кăмпа татма вěренни.

Пирěн ял хěрринче вăрман пур. Эпир унта çырлана та, чечек татма та çўретпěр.

Пěрре анне пире, Çерукпа иксěмěре, кăмпана ячě. Эпир кунтăксене илтěмěр те тухса кайрăмăр.

Вăрманта кăмпа питě нумай. Чи хитрисене пуçтарам-ха тесе эпě юриех хěрлě кăмпа шыраса çўретěп. Ытла та чечен вěсем, ачаш, тунисем шурă, çиелте шурă-шурă пăнчăсем палăраççě.

— Эх, анне савăнать те ěнтě,— тесе васкаса пуçтаратăп. Пуçтартăм-пуçтартăм та, кунтăкăм тулсах кайрě.

Çерук та тăрăшса пуçтарчě. Анчах унăн кăмписем вětě.

— Эсĕ питĕ пĕчĕккисене пуçтарнă-çке,— хĕрхентĕм шăллăма.

— Эпĕ хам та пысăк мар,— тавăрчĕ вăл.

Кăнтăрла çитеспе киле таврăнтăмăр. Анне пире хĕпĕртесе кĕтсе илчĕ.

— Ах, епле лайăх кăмпасем тупнă эсир,— мухтарĕ вăл Çерук кăмписене курсан.

— Ман тата лайăхрах!— мухтасса кĕтетĕп хайхи кунтăка уçса.

— Ку тата мĕскерле япала?— тĕлĕнчĕ анне.

— Питĕ хитре вĕт,— терĕм эпĕ савăнса.

— Хитрине хитре те, шăна кăмпи вăл, çиме юрăхсăр,— ăнлантарать анне.

«Епле апла çиме юрăхсăр пултăр-ха, ара, кăмпа мар-им вăл?»— шухăшларăм тĕлĕнсе. Каярахпа тин астуса илтĕм: пĕррехинче çапла çавăн пек кăмпа çисе пирĕн чăхсем вилнĕччĕ.

— Мĕн тăвас ĕнтĕ ку кăмпапа?— ыйтрăм эпĕ.

— Кайса пăрах çырмана, шывпа юхса кайтăр,— терĕ анне.

Çерука кулăш. Вăл ман çине пăхать те кулать. Пĕр сăмах та калаймарăм, хам йăнăш тунăшăн йĕрсе ярассăм килчĕ.

Çавăнтан кайран тин мĕнле кăмпа çиме юрăхлă иккенне пĕлекен пултăм.

1. Сирĕн вăрманта мĕнле кăмпасем ўсеççĕ?
2. Çиме юрăхлă кăмпасен ячĕсене аса ил. Вĕсем мĕнле йывăç çывăхĕнче ўсеççĕ? Мĕн тума юрăхлă?
3. Çакна ан ман: шăна кăмпи наркăмăшлă пулнăран хăрушă. Тислĕк кăмпи унран та наркăмăшлăрах.